«АНЧАХ» ТАРАН ÇЫРМА ВЁРЕНЕЙМЕРЁМ

ЭПЁ хаçатçă çулĕ çине тăнă çулсенче очерк, фельетон, производство репортажĕ чи сумлă жанр шутланнă. Вĕсене пурте çырайман. Жанр ăстисем хăйсем пулнă. Ум статья вара уйрăм жанр пекехчĕ. Ăна çырма каллех пурне те шанман. Пысăк ăсталăх кирлипе мар. Ум статьяшăн чи пысăк виçепе гонорар тӳленĕ. Физкультурăпа спорт ыйтăвĕсене çутатса тăма эпĕ тытса пынă информаци пайне хушнăччĕ. Теплере пĕрре физкультурăпа спорт та номер "ялавĕ" пулкалатчĕ. Хатĕр калăппа, хăнăхнă сăмахсемпе çырма маçтăрланса çитнисем "Правда" хаçат ум статйисене алă айĕнчех тытнă. Эпир вара хамăр хушăра шӳтлеме кăна пултарнă. Вăл шӳт камран тухнине, мĕнрен пуçланнине пĕлейместĕп. Пуçласа вара Иван Михайлович Михайловран илтнĕччĕ. Тĕп редактор çумне ум статьясем çыртарсах тăнă.

Пĕринче тем ĕçпе ун пӳлĕмне кĕтĕм. Çыру сĕтелне хирĕç диван çинче Иван Михайловичăн пĕрле вĕреннĕ юлташĕ ларать. Пĕрле апата пыма чĕнмешкĕн кĕнĕ вăл кунта. Иван Михайлович пуç çĕклейми çырать. Ыранхи номер валли ум статья кирлĕ.

– Тата нумай кĕттеретнеха? – канăçсăрланать юлташĕ.

– Нумай мар, нумай мар, «анчах» таран çырнă, – терĕ Иван Михайлович.

Хăйĕн сассине, çыру мелне тупма ăнтăлакан хаçатçăсем "илемлĕ" жанрсем еннелле туртăнатчĕç. Ун чухне тем сăлтава пула хаçат ум статьясăр тухни "ЧП" шутланнă пулсан, эрнере пĕрре тухмалли сатира кĕтесĕ сикни те ĕçлекенсене ятлама сăлтав панă.

Районта ĕçленĕ чухнех "Йĕплĕ çăмахăн" хастар авторĕсенчен пĕри пулнă. Павел Крысин та, Александр Аслут та çыру çырса, телефонпа шăнкăравласа ĕç хушсах тăратчĕç. Республикăн тĕп хаçатне кура районтисем те хăйсен сатира кĕтесĕсене тирпейлесе çитернĕччĕ. Капкăн, хĕскĕч, крокодил кĕтесĕсем пур хаçатра тенĕ пекех пурччĕ. Комсомольскинчи "Октябрь ялавĕ" хаçатăн "Хĕскĕчне" мана тыттарнăччĕ те, "Йĕплĕ çăмаха" тивĕçлисем те тупăнсах тăратчĕç. Шупашкара килмелли-мĕн тупăнсан, пушă алăпа пĕрре те çӳремен. "Коммунизм ялавĕн" редакцине кĕрсе тухма сăлтав пултăр тенĕ.

Пĕринче Володарский урамĕнчи Пичет çурчĕн иккĕмĕш хутне хăпартăм кăна, мана хирĕç редактор пырать. Сывлăх сунтăм, ку аллине ман еннелле тăсрĕ те.

– Мĕн илсе килтĕн?

Сăмахсăр-мĕнсĕр тăватта хутлатнă листасене кĕсьерен кăлартăм та ун еннелле тăсрăм. Ку мана тӳрех алăран çавăтрĕ, хăй пӳлĕмне илсе кĕчĕ. Ларчĕ те тӳрех ман хутсене вулама пуçларĕ. Кирлĕ çĕрте тӳрлетрĕ, алă пусрĕ, васкаса чупса тухса кайрĕ. Кĕчĕ те пӳлĕмне, мана, аптăраса тăраканскерне, пырса алă пачĕ.

– Маттур, тата çырсах-тăр, – терĕ Михаил Николаевич Якимов.

Тепĕр кунхи номерте "Йĕплĕ çăмах" кĕтесĕнче хамăн материала курсан тĕлĕнтĕм те, савăнтăм та.

Маншăн, ялкоршăн, редактор хăй тăрăшать пулсан, кирлĕ ĕç тăватăп иккен тесе шутлама пĕрре те пăрахаймарăм çакăн хыççăн. Çакна курнăскер штатра тăман корреспондентсемпе кăнттам та тӳрккес пулаймастăнах. Информаци пайне ертсе пыма тытăнсан, хам валли штатра тăман авторсен списокне турăм. Ĕç хушса çырусем çырсах тăраттăм, телефонпа сыхăнаттăм.

Хальхи информаци пуххисем, радиопа телевиденин информаци кăларăмĕсем мана пĕрре те тивĕçтермеççĕ. Тĕрĕссипе, вĕсене Чрезвычайлă лару-тăру министерстви е Шалти ĕçсен министерстви пĕлтернисем темелле. Унашкаллисене пирĕн вăхăтра та пичетленĕ. Анчах "Пулни-иртни" рубрикăпа. Çитменнине вĕсем хальхи пек йышлă пулман. Суйланă, тиркенĕ. Кӳкеçре пĕрисем сысна пусма пикеннĕ те, çыхса пăрахнă выльăх çухăрнине илтсе вăрмантан хир сысни вирхĕнсе тухнă, çынсене хăратса пĕтернĕ. Лешсем тара-тара пытансан, сысна тăлăсенчен хăтăлса тарнă. Хыпарĕ ку пирĕн пуçлăхсен хăлхине те кĕнĕ. "Пулни-иртни" рубрика валли çырма мана хушнăччĕ. Тĕлĕнтермĕш хыпар шыраттарса чуптарнине урăх ас тумастăп та. Обкомпа Министрсен Канашĕ ирттерекен мероприятисен планĕ сĕтел çинчех выртнă. Вĕсене пĕрне те сиктерме юраман. Çитменнине тата хăшĕн те хăшĕн хушаматне мĕнле йĕркепе çырмаллине пĕлсех тăраттăмăр. Кама та пулсан сиктерсе хăварсан ят тиветчĕ. Унпа кăна та çырлахман, асăрхаттарнă та, премисĕр те хăварнă. Манăн, пай пуçлăхĕн, ытти авторсен хыпарĕсенче те чи малтан çав хушаматсене тĕрĕслемеллеччĕ. Сумлă хушаматсем хыççăн "Тата ыттисем те" тесе хушса хума пĕрре те манман. Пĕринче çав сăмах мана çăлса та хăварчĕ. Хаçатри информацисене ятарласа пăхса ларакансем пулнă-ши е çыннисем хăйсем сăнасах тăнă-ши? Ăна пĕлместĕп. Пысăккисенчен кама та пулсан сиктерсе хăварсан редактор патне тӳрех шăнкăравлатчĕç. Пĕринче темле мероприятире Михаил Васильевич Шутин та пулнине çырмасăр хăварнă та, çакă тепĕр кунах ман пата шăнкăравларĕ. Редактор вырăнта пулман пулас. «Тата ыттисем те» шутне кĕртнĕ пуль сире», – терĕм çакна. Çакăн хыççăн чылай вăхăтран халăх писательне Леонид Агакова пытармалла пулчĕ. Тупăкне электроаппарат завочĕн Культура керменне лартнăччĕ. Çакăнта Шутинпа тĕл пултăмăр. "Хальхинче те мана "тата ыттисем те" шутне кĕртетнеха?" – терĕ çакă.

Ырра курса ырра вĕренетĕн тенине асрах тытнă эпир. Çавăнпа ырă информаци пуçтарнă, ырă ĕçсене çутатса тăнă. Вулакана усал хыпарпа хăратма, тискерлĕхпе тĕлĕнтерме тăрăшман. Усал-тĕселе, йăх-яха питлемелли "Йĕплĕ çăмах" пулнă.

Официаллă мероприятисенчен пăрăнма тăрăшаттăм. Редактор хушмасан хам пуçарупа хыпăнса туха-туха кайман вĕсене. Маншăн "Информациллĕ пĕлтерӳ" жанрĕ чи юратманни те чи йывăрри пулнă. Республика хăнисем ун чухне те, хальхи пекех, йышлăн пулнă, килсех тăратчĕç. Социализм çĕршывĕсенчен кăна мар, Африкăран та, Азирен те. Америка континентĕнчен килнисене кăна пит ас тусах каймастăп. Пĕр вăхăтра Африка çыннисем иленмеллипех иленнĕччĕ. Пĕрисене ăсатса яратпăр кăна, теприсем килсе те çитеççĕ. Вĕсен ячĕсемпе хушамачĕсем ас туса юлма та, çырма та йывăрччĕ. Вара журналистсем хамăра пĕлме хамăрла ятсем тупа-тупа параттăмăр: Хури, Хурараххи, Чи хури.

Спорт информацийĕ пуçтарса хăшкăлман. Ку темăпа çыракансем йышлăн пулнă. Калаçса татăлнă пекех пурте пĕр чĕлхепе çыратчĕç те, урăхлатма тиветчĕ. Вырăсла "головой забил красивый гол" тени кулăшла мар. Çавна чăвашла тӳремĕнех куçаратчĕç те кулăшла пулса тухатчĕ. "Пуçпа илемлĕ мечĕк тапса кĕртрĕ" тенине тӳрлетсе ĕлкĕрме çукчĕ. Пĕрре мар туха-туха кайнă вăл хаçатра.

Тĕп ĕçе тунипе пĕрлех хамăрăн юратнăрах темăсене те манса хăварман. Александра Осипова çыру йĕрĕпе çӳресе чуна хускатакан материалсем çыратчĕ. Иван Михайлов çут çанталăка сыхласа сахал мар çивĕч статья пичетлерĕ. Ун чухне экологи сăмах чĕлхене иленменччĕ. Ыйтăвĕ ун чухне те çивĕччĕ. Валентина Минеева ал ĕç ăстисене шыратчĕ. Эпĕ вара культурăпа историн юхăнса ларакан палăкĕсене хӳтĕлеме кĕрсе кайрăм. Ку ун чухне такам та такăрлатнă тема пулман. Мускав хаçачĕсем те унран пăрăнарах тăратчĕç. Историпе культура палăкĕ тени ун чухнехи çынсемшĕн чиркӳ е мăнастир тениех пулнă-çке. Шупашкартах вуннăран та иртетчĕç. ВООПИК /Пĕтĕм Союзри историпе культура палăкĕсене сыхлакан общество/ туни журналистсен аллине ирĕке кăларчĕ. Шупашкар ГЭСĕн пĕвине пĕвелеме тытăнсан шыв айне пулакан кивĕ хулари палăк çуртсене сăрта куçара-куçара лартас текен шухăш пурне те канăç пами пулчĕ. Куçарма тивĕçлĕ палăк çуртсен списокне туса хатĕрленĕччĕ, унта, хальхи пекех ас тăватăп, 24 çурта кĕртнĕччĕ. Кашни палăк çуртах хӳтĕлесе çыраймарăм, паллах, "Коммунизм ялавĕ" ку ыйтăва ытти хаçатсенчен çивĕчрех те вырăнлăрах çĕкленине республика ертӳçисем те палăртсах тăратчĕç.

Анчах вăхăт çитрĕ те, куçарса каясса кĕтсе ларакан палăк çуртсене сирпĕтме пикенчĕç. Çĕрле, çынсем çӳреме пăрахсан, кĕрслеттерчĕç кăна. Халĕ Атăл хĕрринчи сăртра, Введени соборĕпе юнашар 24 палăк çуртран иккĕшĕ лараççĕ – Кадомцев купса çурчĕпе Тăвар кантурĕ. Анчах вĕсене хальхи кирпĕчне купаланă, хальхи цементпа хытарнă. Кивĕ чертежсем тăрăх вĕсене ку чухнехи строительсем хăпартнă.

Пурнăçăмра иртнĕ вăхăт тепре çаврăнса тухас-мĕн пулсан, «Обком ларăвĕнче «Хаçатăн хăш пайне тытса пыма килĕшетĕн?» – тесе ыйтсан пĕр иккĕленмесĕрех информаци пайĕ тенĕ пулăттăм. Пурнăç авăрĕ вăл – информаци пайĕ.

Денис ГОРДЕЕВ,

1976-1980 çулсенче "Коммунизм ялавĕ" хаçатăн информаци пайне ертсе пынă.